28-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
ДЕКАБРЬ
23
ВЫРСАРНИКУН
249 (7000) №

ЧӐВАШ КОММУНИ

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаçачӗ

Машинӑпа трактор станцийӗсен ӑмӑртӑвӗ

«Çураки хӗрсе пырать. Çак вӑхӑтри кашни кун, кашни сехет тырпул тухӑçлӑхне татса парать. Пӗр кун кая юлса акрӑн—пӗр уйӑх çухатрӑн, тырпул тухӑçлӑхне чакартӑн. Çавӑнпа кашни колхозник васкать, кунӗн-çӗрӗн ӗçлет. Шӑпах çак хӗрӳллӗ вӑхӑтра колхоза МТС тракторӗсем килчӗç те суха тума тытӑнчӗç. Колхоз председателӗ савӑнчӗ, колхозниксем савӑнчӗç. Анчах пӗр-икӗ кун иртсенех тракторӑн темӗнле пайӗ ванса кайрӗ те, çураки пӗтиччен вӑл пӗр вырӑнтан тапранаймарӗ. Колхозниксем вара питӗ пӑшӑрханчӗç»,—тесе çырнӑччӗ пирӗн пата пӗр корреспондент иртнӗ çураки вӑхӑтӗнче.

Çакӑн пек тӗслӗхсем республикӑри МТС-сенче иртнӗ çуркунне сахал мар пулчӗç. Ун чухне ака ӗçӗсем уйрӑмах Кувакино, Первомайски, Улатӑр тата ытти районсенче юлса пыратчӗç. Çав районсен руководителӗсем час-часах вара: «МТС начар ӗçлет, çавӑнпа юлса пыратпӑр», тесе калатчӗç. Анчах мӗн пирки пулнӑ-ха çав чуна кӳрентерекен çитменлӗхсем? Вӗсем кӑçалхи çураки вӑхӑтӗнче ан пулччӑр тесен, мӗн тумалла-ха?

Çак ыйтусем ӗнтӗ халӗ районсемпе МТС-сен руководителӗсемшӗн чи пысӑк та чи çивӗч ыйтусем пулса тӑраççӗ. Вӗсем пирки çуракине тухсан мар, шӑпах халӗ тӗплӗн шухӑшласа пӑхмалла.

Паллӑ ӗнтӗ, кашни трактор тата кашни ялхуçалӑх машини тӗрӗс-тӗкӗл ӗçлесен кӑна пӗтӗм МТС ӑнӑçлӑ ӗçлеме пултарать. Çапла тӑвас тесен, вӑл тракторсемпе машинӑсене тӗплӗн юсаса хатӗрлени кирлӗ. Анчах вӗсене акана тухсан мар, унччен чылай малтан юсаса хатӗрлемелле те темиçе хут çине-çинех тӗрӗслесе пӑхмалла, кашни пӗчӗк çитменлӗхех ӳркенмесӗр шыраса тупса, сирме тӑрӑшмалла. Апла пулсан, машинӑсемпе тракторсене юсас ӗç халӗ, хӗллехи вӑхӑтра, хӗрӳллӗн пулса пымалла. МТС-сене çураки вӑхӑтӗнче лайӑх ӗçлеттерес тесе, ВКП(б) райкомӗсемпе райисполкомсен халӗ ытларах тӑрӑшмалла.

Калас пулать, тракторсемпе ялхуçалӑх машинисене юсас ӗç республикӑри нумай МТС-сенче халӗ çителӗксӗр пулса пырать-ха. Кувакино, Сӗнтӗрвӑрри, Хӗрлӗ Чутай, Етӗрне, Çӗмӗрле, Сиява тата Шӑмӑршӑ МТС-ӗсенче декабрӗн 10-мӗшӗ тӗлне пӗр трактор та юсаса кӑларман пулнӑ-ха. Çав МТС-сенче юсав ӗçне начар хатӗрленнӗ, тракторсемпе машинӑсене МТС килкартине вӑхӑтра илсе пыман, кивӗ запаслӑ пайсене юсаса хатӗрлесе çитермен, çӗнӗрен туса кӑларма та тытӑнман.

Малта пыракан машинно-тракторнӑй станцисем юсав ӗçне вӑхӑтра тытӑнчӗç, плана малтанхи кунсенчен пуçласах ытлашшипех пурнӑçа кӗртсе пыраççӗ. Красноармейскипе Йӗпреç МТС-ӗсем IV-мӗш кварталта тракторсем юсамалли плана декабрӗн 1-мӗшӗ тӗлнех 113 процент тултарнӑ. Юсав ӗçне вӑхӑтра хатӗрленни, рабочисен ӗç дисциплини çирӗп пулни тата вӗсем пӗр кӑмӑллӑ пулса кал-кал ӗçлени, юсав ӗçӗнче социализмлӑ ӑмӑртӑва вӑйлатса пыни,—акӑ мӗн пулӑшнӑ Красноармейски МТС-не ӗçре çитӗнӳсем тума. Кунта пӗтӗм коллектив тракторсене юсанӑ çӗрте ӗçлет. 12—14 сехет хушши кашни кунах юсав ӗçӗ вӗресе тӑрать. Мастерскойӗнче йӗркелӗх; станоксемпе инструментсем юсавлӑ. Бригадӑсем юсав ӗçне хӑвӑртрах вӗçлессишӗн пӗр-пӗринпе ӑмӑртаççӗ. Рабочисене лайӑх условисем туса панӑ, столовӑй яланах ӗçлет. Машинӑсемпе тракторсене юсас ӗçе çакӑн пек организацилеме кашни МТС-рах майсем çителӗклӗ.

Ӗнер эпир хамӑр хаçатра Красноармейски МТС коллективӗ республикӑри МТС-сен трактористчӗсене, комбайнерӗсене, механикӗсене, рабочийӗсемпе служащийӗсене чӗнсе каланине пичетлесе кӑлартӑмӑр.

«1946 çулта — Сталинла тӑваттӑмӗш пилӗкçуллӑхӑн пӗрремӗш çулӗнче—пирӗн ялхуçалӑхӗ акӑнакан çӗр лаптӑкне маларла ӳстерме, тырпул тухӑçлӑхне ӳстерме тата ялхуçалӑх продукчӗсен пӗтӗм хисепне нумайлатма тивӗçлӗ. Çак пысӑк задачӑна пурнӑçа кӗртес ӗçре малта пыракан техникӑпа хӗçпӑшалланнӑ машинно-тракторнӑй станцисем татӑклӑ вырӑн йышӑнса тӑмалла. МТС работникӗсен задачи—машинӑсемпе тракторсен паркне вӑхӑтра тата лайӑх хатӗрлесе çитересси, тракторсемпе комбайнсем тата ытти ялхуçалӑх машинисем пӗр чарӑнмасӑр ӗçлемелле тӑвасси пулать»,—тесе çырать Красноармейски МТС коллективӗ хӑйӗн çырӑвӗнче.

Килес çулхи уйхир ӗçӗсене тума лайӑхрах хатӗрленсе çитес шутпа, Краснодар крайӗнчи Старо-Мышастовски МТС коллективӗн пуçарӑвне йышӑнса, Красноармейски МТС трактористчӗсемпе ытти работникӗсем чылай обязательствӑсем илнӗ. Вӗсем тракторсемпе ялхуçалӑх машинисене кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра юсамалли плана 1946 çулхи февралӗн 10-мӗшӗ тӗлне—СССР Верховный Советне суйламалли кун тӗлне—«лайӑх» тата «отлично» паллӑсемпе пурнӑçа кӗртме пулаççӗ.

Малта пыракан МТС-сен çак пуçарӑвӗ килес çуракине хатӗрлес ӗçре калама çук пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. ВКП(б) райкомӗсемпе МТС руководителӗсен тата машинно-тракторнӑй станцисенчи пуçламӑш парторганизацисен задачи—Старо-Мышастовски тата Красноармейски МТС-сен коллективӗсем чӗнсе каланине кашни трактористпа юсав ӗçӗнчи кашни рабочи патне çитересси, вӗсене Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнтарасси тата харпӑрхӑй илнӗ обязательствӑсене пурне те вӑхӑтра пурнӑçа кӗртмелле тӑвасси пулать.

Гоэлро планне туни 25 çул тултарчӗ

Пӗтӗм Российӑри Советсен VIII-мӗш съезчӗ Гоэлро планне çирӗплетнӗренпе 25 çул тултарчӗ. Гоэлро планӗ вӑл пирӗн çӗршыври халӑх хуçалӑхне аталантармалли пӗрремӗш государство планӗ пулнӑ, ӑна Ленин партин иккӗмӗш программи тесе ят панӑ. Кая юлнӑ Российӑна электрификацилемесӗр экономика енчен урӑхлатма май çуккине, электричествӑсӑр промышленноçа хӑпартма, ялхуçалӑхне урӑхла йӗркелеме май çуккине Совет государствин аслӑ çулпуçӗсем Ленинпа Сталин лайӑх курса тӑнӑ.

Гоэлро планӗнче çӗнӗрен 30 район электростанцийӗ тума палӑртса хунӑ пулнӑ. Вӑл плана 15 çул хушшинче пурнӑçа кӗртмелле пулнӑ. Çав плана нумай иртерсе пурнӑçланӑ. 1935 çулта район электростанцийӗсен хӑвачӗ планра палӑртнӑ 1.750.000 киловатт вырӑнне 4.550.000 киловатт таран ӳснӗ. Электричество энергийӗ тӑвас тӗлӗшпе вӑрçӑччен Россия пӗтӗм тӗнчере 13-мӗш вырӑнта тӑнӑ пулсан, Совет Союзӗ вӑл тӗлӗшпе 1939 çулта 3-мӗш вырӑна тухнӑ. Вӑл промышленность тӗлӗшӗнчен вӑйлӑ аталаннӑ Англирен, Францирен тата ыттисенчен те иртсе кайнӑ.

Ленинпа Сталин палӑртнӑ план тӑрӑх электрификацилениние пула, промышленноçпа транспорт тата строительствӑпа ялхуçалӑхӗ техника енчен çӗнелчӗç, промышленноçӑн çӗнӗ отраслӗсем ӳссе ларчӗç. Теплофикаци те вӑйлӑ аталанса пычӗ. Теплоэлектроцентральсен хӑвачӗ енчен илсен, Совет Союзӗ тӗнчере чи малти вырӑнта тӑрать. 120 хулара ытла теплоэлектроцентральсем пур.

Электростанцисен хисепӗ ӳссе пынӑ май индустриллӗ питӗ пысӑк районсенче энерги парса тӑракан системӑсем пулса тӑнӑ, унтан вара çав системӑсене пӗрлештерме тытӑннӑ. Хальхи вӑхӑтра, сӑмахран, Горький, Иваново, Ярославль тата Мускав системисем пӗрлешнӗ.

Электрификаци планне пурнӑçа кӗртни эпир Отечественнӑй аслӑ вӑрçӑра çӗнтерессин пӗр условийӗ пулнӑ. 1941—1944 çулсем хушшинче çӗнӗ электростанцисем тунине пула тата киввисене аслӑлатнине пула Уралти, Новосибирскри, Ташкентри, Хусанти электростанцисен хӑвачӗ икӗ хута яхӑн ӳснӗ, Омскри, Куйбышеври, Карагандӑри тата Красноярскри электростанцисен хӑвачӗ виçӗ хут тата ытларах та ӳссе кайнӑ.

Хӗрлӗ Çар çӗнтерӳллӗн тапӑнса пыма пуçланӑ хыççӑн, 1942 çултан пуçласа, совет энергетикӗсем фашистла ирсӗрсем ишӗлтерсе хӑварнӑ электростанцисене юсаса çӗнӗрен хута яма тытӑнчӗç. Çак ӗç хӑвӑртланса пырать. 1945 çул пӗтнӗ тӗле район электростанцийӗсене нумайӗшне хута янӑ. Çав электростанцисем хушшинче Зуеври, Сталиногорскри, Дубровскри, Днепродзержинскри тата ытти вырӑнсенчи хӑватлӑ электростанцисем пур. Ленинградри, Харьковри, Киеври, Ростоври, Грозныйри, Севастопольри, Минскри электростанцисене те юсаса çӗнӗрен ӗçлеттерме пуçланӑ.

Хальхи вӑхӑтра энергетикӑна аталантармалли пилӗкçуллӑх план туса пӗтереççӗ. Электростанцисен Халӑх Комиссариачӗ пӑхса тӑракан станцисен вӑрçӑчченхи хӑватне 1946 çулта çитетпӗр, çав Халӑх Комиссариачӗ пӑхса тӑракан мӗнпур электростанцисене, пӗтӗмпех е пӑртак ишӗлнӗскерсене, 1948 çулта юсаса пӗтерсе хута яма палӑртса хунӑ.

Пилӗкçуллӑх планра гидроэлектростанцисем тӑвас ӗç уйрӑмах пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Вӑрçӑ вӑхӑтӗнче Грузири Крамски электростанцие, Арменири Севански электростанцие тата Рыбинскри электростанцие тӑвас ӗçе хӑвӑртлатнӑ. Азербайджанра питӗ пысӑк Мингечаурски электростанци тӑваççӗ, çав электростанцие туни Курапа Аракс улӑхне шӑварма май парать. Халӗ тата Кама шывӗ çинче хӑватлӑ электростанцие тума хатӗрленме пуçланӑ. (ТАСС).

МИНСК ХУЛИНЧЕ ВЕЛОСИПЕД ЗАВОЧӖ ТӐВАÇÇӖ

МИНСК, декабрӗн 21-мӗшӗ. (ТАСС). Минск хулинче велосипед завочӗ тума пуçланӑ. Халӗ çав завода тумашкӑн вырӑн хатӗрлеççӗ, оборудовани илсе пыраççӗ.

Велосипед завочӗ çулталӑкра 100.000 велосипед туса кӑлармалла. Унӑн малтанхи пайӗ 1946 çул пӗтеспе ӗçлеме пуçлать.

Çӗршыв СССР Верховный Советне суйлама хатӗрленет

СССР Верховный Совет суйлавӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑрту

РАБОЧИСЕН ӖÇРИ ХАСТАРЛӐХӖ

Республикӑри промышленность предприятийӗсемпе артельсем СССР Верховный Совет суйлавӗсене ӗçре çӗнӗ çитӗнӳсем тунипе кӗтсе илме хатӗрленеççӗ. Суйлав ячӗпе пыракан социализмлӑ ӑмӑртӑва кашни кун çӗнӗрен те çӗнӗ предприятисем хутшӑнаççӗ.

Шупашкар хулинчи апат-çимӗç комбиначӗ (директорӗ Ф. Терешков) октябрь уйӑхӗнче Чӑваш АССР Совнаркомӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗçлӗ пулчӗ. Халӗ комбинат коллективӗ СССР Верховный Совет суйлавӗсем ячӗпе пыракан социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса пырать. Рабочипе рабочи, цехпа цех, сменӑпа смена пӗр-пӗринпе ӑмӑртса, ӗç тухӑçлӑхне кулленех ӳстерсе пыраççӗ. Комбинат декабрь уйӑхӗнчи производство планне 200—250 процента çити тултарма сӑмах панӑ. Хӑйсен сӑмахне комбинатра ӗçлекенсем чыслӑн пурнӑçласа пыраççӗ. Декабрӗн 20-мӗшӗ тӗлне комбинат çирӗм кунхи плана 109,6 процент тултарнӑ. Ӑмӑртура уйрӑмӑнах конфетсем тӑвакан цехри Вера Вдовинӑпа Григорий Егоров бригадисем малта пыраççӗ. Вӗсем хӑйсен заданине кулленех 150 процент тултараççӗ.

Премӗксем тӑвакан цехри Мария Ермолинӑпа Анисия Вороженина ертсе пыракан бригадӑсем кулленхи задание кашниех 130—140 процент тултарса пыраççӗ.

Варенисем тӑвакан цехра коммунист Мария Платонова ертсе пыракан бригада тухӑçлӑ ӗçлет. Бригада хӑйӗн заданине кулленех 150 процент таран тултарса пырать.

В. ПЕРМЯКОВ.

Çулталӑкри плана срокчен тултарнӑ

Канашри типографи коллективӗ çулталӑкри производство планне декабрӗн 12-мӗшӗ тӗлне 101 процент тултарчӗ. Халӗ типографире ӗçлекенсем планран иртерсе продукци пама тытӑннӑ.

Суйлав ячӗпе пыракан социализмлӑ ӑмӑртура уйрӑмӑнах буквӑсем пухакан цехри Мария Горбуновӑпа Прасковья Федотова стахановкӑсем тухӑçлӑ ӗçлеççӗ. Вӗсем хӑйсен заданине кулленех 130—140 процент тултарса пыраççӗ.

Пичетлекен цехра Морозов, А. Егоров тата О. Васильева юлташсем лайӑх ӗçлеççӗ. Вӗсем кулленхи задание кашниех 120—130 процент тултараççӗ.

Типографи коллективӗ çамрӑк рабочисене ӗçе вӗрентес тӗлӗшпе те пысӑк ӗçсем тунӑ. Юлашки 2—3 уйӑх хушшинче кӑна кунта тӗрлӗ специальноçпа 11 çын вӗрентсе хатӗрленӗ. Вӗсем халӗ кашниех хӑйсем тӗллӗн ӗçлеме тытӑннӑ.

М. ВАСИЛЬЕВ.

* * *

ЕЛЧӖК. Сӗт-çу завочӗ (директорӗ В. Моско) çулталӑкри производство планне декабрӗн 1-мӗшӗ тӗлне 119,1 процент, вӑл шутран государствӑна çу памалли плана 101 процент тултарнӑ.

Государствӑна сӗт-çу парас тӗлӗшпе «Осоавиахим» тата Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозсем лайӑх ӗçлеççӗ. Вӗсем сӗт-çу памалли плана 140—150 процент тултарнӑ. Чапаев, Ленин ячӗсемпе тӑракан тата «Марс» колхозсем те государствӑна сӗт-çу памалли плана ытлашшипех тултарчӗç.

Н. САМАРКИНА.

Вӑрман хатӗрлекенсем патӗнче

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Мӑн Супар ял Советӗнчи «Сила» колхоз суйлава вӑрман хатӗрлевӗнче пысӑк çитӗнӳсем тунипе кӗтсе илме хатӗрленет. Вӑрманта ку колхозри кашни бригадӑранах 6-шар çын лашапа тата 10—12-шер çын çуран ӗçлеççӗ. Уйрӑмӑнах Отечественнӑй вӑрçӑ участникӗсем паха тӗслӗхсем кӑтартса пыраççӗ. Орденоносец Степан Михайловпа медаленосец Сергей Кузьмин фронтовиксем хӑйсен заданине кулленех 120—150 процент тултараççӗ. Вӑрманта колхозниксемпе пӗрле колхоз председателӗ Андрей Павлов хӑй те ӗçлет.

Г. МЕФОДЬЕВ.

Финанс работникӗсен çитӗнӗвӗ

ВӐРНАР. (Телефонпа, хамӑр корр.). Районри финанс работникӗсем, 1945 çулхи IV-мӗш кварталти финанс планне тултарса çитермелли уйӑхлӑха республикӑра чи малтан хутшӑнса, кварталти плана декабрӗн 15-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпех тултарма обязательство илчӗç. Хӑйсен сӑмахне финанс работникӗсем чыслӑн пурнӑçларӗç. Район IV-мӗш кварталти финанс планне 107 процент тултарчӗ. Хирпуç ял Совечӗ (председателӗ Николаев, налог агенчӗ Борисова)—плана 139 процент, Уравӑш ял Совечӗ (председателӗ Иванов, налог агенчӗ Сергеев)—138,8 процент, Йӑршӑпуç ял Совечӗ (председателӗ Одинцов, налог агенчӗ Кириллов) 136,1 процент тултарнӑ. Районра пурӗ 10 ял Совечӗ хӑйсен планӗсене иртерсе тултарнӑ.

Е. ВОЛКОВ.

Çӗрпӳре суйлава начар хатӗрленеççӗ

СССР Верховный Советне суйласси çинчен Указ тухнӑранпа вӑхӑт икӗ уйӑх çура ытла иртрӗ. Анчах ӗççынни депутачӗсен Çӗрпӳ хула Совечӗн исполкомӗнче суйлав пуласси çине ӗнер çеç пӗлнӗ пек лараççӗ.

Кунта суйлавçӑсен списокне тума декабрӗн 20-мӗшӗ тӗлне пачах та тытӑнман. Халӗ çаплах суйлавçӑсене урамсем тӑрӑх килӗрен çырса тухас ӗç пырать. Хула Совечӗн территорине кӗрекен 18 урамран тата 2 колхозран 9 урам тӑрӑх çеç суйлавçӑсене килӗрен çырса тухнӑ. Ытти урамсене вара халлӗхе пырса тӗкӗнмен-ха. Çырса тухнӑ çӗрте те çынсен хушамачӗсене, ячӗсене, çул шучӗсене пӑтраштарса пӗтернӗ. Сӑмахран, Ленин урамӗ тӑрӑх çырса тухнӑ хут çинче Н. А. Дидовец хушаматне—Дидаец тесе çырнӑ. Вӑл 1928 çулта çуралнӑ, анчах çуралнӑ кунне кӑтартман. Çав урамрах Толмачев Михаил Александрович вырӑнне—Толмачева Михаил Александрович тесе, Клеменычева вырӑнне—Клеменочева тесе çырнӑ. çул шутне пачах та кӑтартман. 1928 çулта çуралнисенне нумайӗшӗнне çуралнӑ кунӗсене палӑртман. Кунта суйлавçӑсене килӗрен çырса тухас ӗçе хут сахал пӗлекен çынсене хушни курӑнсах тӑрать.

Хула тулашӗнче—Осоавиахим лагерӗнче, ГЭС-ра, арманта, «Заготскотпа» салотопка çурчӗсенче пурӑнакан çынсене пуçта та ӗçлеменнисене çеç çырнӑ, ӗçлекенсене 15—20 çынна çырмасӑр хӑварнӑ.

Хула Совет исполкомӗн секретарӗ Мореплавцев юлташ суйлавçӑсен списокне мӗнле формӑпа тумалли çинчен декабрӗн 20-мӗшӗччен те пӗлмен. Вӑл çавӑнпа хӑйӗн формине шухӑшласа кӑларнӑ. Унта мӗнле нациран тухнине палӑртакан графана тата ыттине те кӗртсе янӑ.

Çак ӗçсем пурте Çӗрпӳ райсовет исполкомӗнчен виç-тӑватӑ утӑмра пулса иртеççӗ. Хулара хут пӗлекен çынсем, культурӑллӑ çынсем çителӗклӗ. Анчах вӗсене райисполком та, горисполком та суйлавçӑсен списокӗсене тӑвас ӗçе явӑçтарман. Тӳррипе каласан, горисполком секретарьне Мореплавцев юлташа ку таранччен никам та пулӑшу пама шутламан. Ӑна горисполком председателӗ патне кӗрекен алӑк патне вырнаçтарса лартнӑ та кун каçиччен ун умӗнчен 50—60 çын иртсе çӳрет, кашни тӗрлӗ ыйту парать. Вӑл список тӑвас тӗлӗшпе пикенсе ӗçлес вырӑнне ытларах тарӑхса ларать.

Организациллӗ-техникӑллӑ ӗç япӑххи чи малтан райисполкомран килет. Сӑмахран, декабрӗн 15-мӗшӗнче районри «Сталинец» хаçатра участоксенчи суйлав комиссийӗсен составне çирӗплетесси çинчен Çӗрпӳ райисполкомӗ йышӑннӑ решени пичетленсе тухнӑ. Райисполком секретарӗ Карасева юлташ айӑпӗпе ку решенире пӑтраштарусем чылай тухнӑ. Янзакасси ял Советӗнче эпир суйлав участокӗн членӗсемпе тӗлпулса калаçма шутларӑмӑр. «Путь Ленина» колхозран участокри суйлав комиссине Гаврилов юлташа кандидата тӑратнӑ пулнӑ. Райисполком çак суйлав участокӗнчи комисси составне ыттисемпе пӗрлех çирӗплетнӗ, анчах Гаврилов юлташӑн ячӗ хаçатра тухман, ӑна сиктерсе хӑварнӑ.

— Решенире ман ята кӑтартман пулсан, манӑн суйлав комиссийӗнче мӗнле ӗçлес-ха?—тет Гаврилов юлташ. Тӗрӗс ыйту.

138-мӗш Уйкас суйлав участокӗнчи комисси членӗн ятне Антонин Евдокимович Евдокимов вырӑнне Антонина Евдокимовна Евдокимова тесе çырнӑ. Хӑшпӗр комисси членӗсен ашшӗ ячӗсене пӑтраштарса пӗтернӗ.

Çаксем вӗсем пурте суйлав документӗсене йӗркелесе çырасси çине Çӗрпӳ райисполкомӗ çиелтен, ответсӑррӑн пӑхнине кӑтартса параççӗ.

Суйлавçӑсен списокӗсене тӑвас ӗç хӑшпӗр ял Совечӗсенче те япӑх пырать. Тӗнсӗр, Иваново ял Совечӗсенче списоксене малтанлӑха та паларса çитермен. Янзакасси ял Советӗнче списока çирӗп алфавит тӑрӑх туман, нумай суйлавçӑсенне ашшӗ ячӗсене кӑтартман, ашшӗ ячӗн малтанхи саспаллине çеç лартса янӑ.

Суйлав участокӗсем ӑçта пулмаллине райисполком кӑтартса панӑ. Анчах участоксене йӗркене кӗртме ниçта та тытӑнман. Чылай ял Совечӗсем ку ӗçе участоксенчи суйлав комиссийӗсен ӗçӗ тесе шутлаççӗ. Тӗрӗссипе, ял Совечӗсенче сасӑламалли участоксене кӑтартса панӑ, анчах участоксенчи суйлав комиссийӗсене куллен ӗçлемелли вырӑн уйӑрса паман. Комиссисен ял Совет çурчӗсенче вырнаçмалла пулать теççӗ. Анчах, сӑмахран, Янзакасси ял Совечӗн çуртне пачах та хутса ӑшӑтмаççӗ. Унта суйлав комиссийӗ те, ял Совечӗ хӑй те ларса ӗçлеме пултараймасть. Çуртӗнче таса мар, стена çинче «шӑнасене пӗтерер» текен сарӑхса кайнӑ хут таткипе тахçанхи лозунгсемсӗр пуçне урӑх нимӗн те çук.

Хулара кӑшт лайӑхрах пулма тивӗçлӗ пек ӗнтӗ. Анчах унта та йӗрке тӗлӗшпе лайӑххине курма çук. Çӗрпӳри виçӗ участокран пӗрине Педучилище çуртне вырнаçтарнӑ. Культурӑллӑ учреждени! Анчах пӑхӑр-ха ун ӑшне кӗрсе. Маччасем çинчен эрешмен картисем усӑнса тӑраççӗ, сивӗ, стенисем çара, педучилищӗре çак кунсенче çеç тухнӑ стена хаçатӗнче суйлав çинчен нимӗн те шарламан. Пӗр сӑмахпа каласан, райисполкомпа горисполком участок уйӑрнӑ та—алӑ сулнӑ.

Массӑллӑ-политикӑллӑ ӗç мӗнле пынине илсе пӑхсан, пире пӗр тӗслӗх питӗ тӗлӗнтерчӗ. Эпир Тивӗшри комсомол организацийӗн секретарӗпе С. Никитин юлташпа тӗл пулса калаçрӑмӑр. Вӑл агитатор пулса ӗçлет. Комсомол организацие ертсе пырать. Колхозниксене Суйлав Законне ӑнлантарса парать. Çав вӑхӑтрах пирӗн калаçуран вӑл Суйлав Законне те, СССР Конституцине те пӗлменни курӑнчӗ. Сӑмахран, Никитин юлташ СССР Верховный Совечӗ 11 палатӑран тӑрать, унта эпир Чӑваш республикинчен 11 депутат суйлатпӑр, ыттисене вара — РСФСР Верховный Советне 1 депутат, Чӑваш АССР Верховный Советне тепӗр депутат суйлатпӑр, тесе ответлерӗ. Ку ӗнтӗ активист «ӑнланӑвӗ». Кун пек тӗслӗхсене эпир актив хушшинче татах та тӗл пултӑмӑр.

Янзакасси ял Советӗнчи пилӗк суйлавçӑпа тӗл пулса калаçсан, тӑваттӑшӗ суйлав çинчен нимӗн те пӗлместпӗр, тесе ответлерӗç.

Тӳрех калас пулать, агитаци ӗçне чылай çӗрте ячӗшӗн çеç туса пыраççӗ. Хӑшпӗр агитаторсем хӑйсем, «пурне те пӗлессине шанса», вӗренме тӑрӑшмаççӗ. Çапла вара хӑйсем пӑтрашнипе çитмест, суйлавçӑсене те пӑтраштараççӗ. Ӑнлантару ӗçӗ пуринчен ытла пухусем урлӑ пулса пырать. Пухусене пурте çӳремеççӗ, анчах килӗрен ӑнлантарса парас ӗçе йӗркелемен.

Çӗрпӳ районӗнче суйлава хатӗрленес ӗç хӑй тӗллӗн пулса пырасса шанаççӗ.

А. ЭСХЕЛЬ.

Старо-Мышастовски МТС коллективӗ чӗнсе каланине йышӑнатпӑр

Кӑçал эпир чылай паллӑ çитӗнӳсем турӑмӑр. Çулталӑкра тракторсемпе ӗçлемелли плана, авӑн çапассипе пӗрле шутласан, 120 процент ытларах тултарнӑ. МТС-ри 16 трактор бригадинчен виçӗ бригада хӑйсен çулталӑкри планне икӗ хут иртерсе тултарчӗç. Александр Северов ертсе пыракан 6-мӗш бригада хӑйӗн çулталӑкри планне 218 процент, Иван Ситов бригади 202 процент, Василий Пыркин ертсе пыракан бригада 200 процент ытла тултарнӑ.

Уйрӑм трактористсем çулталӑкри плана 300 процент ытла тултарни те пулнӑ. Улттӑмӗш бригадӑри Курносова, Викторова тата Кудашова трактористкӑсем хӑйсен сменинче 400-шер гектар ытла сухаларӗç.

Кӑçалхи çулччен пирӗн МТС государство умӗнче парӑмлӑ пулнӑ. МТС машинисемпе ӗçленӗшӗн натуроплата пухмалли плана çулран-çул пурнӑçласа пырайман. Кӑçал вара натуроплата памалли плана МТС ӗçлекен колхозсем 109 процент ытла тултарчӗç.

«Звезда» колхоз (председателӗ Отечественнӑй аслӑ вӑрçӑ инваличӗ орденоносец Еремеев юлташ) натуроплата тӳлемелли кӑçалхи тата иртнӗ çулхи парӑмсене те пӗтӗмпех ноябрь уйӑхӗ тӗлнех парса татрӗ.

Çуракине тата ялхуçалӑхӗнчи ытти ӗçсене ӑнӑçлӑ туса иртересси тракторсене вӑхӑтра тата лайӑх юсанинчен килет. Çакна шута илсе, кӑçал эпир тракторсене юсас ӗçе вӑхӑтра тытӑнтӑмӑр. СССР Верховный Совет суйлавӗ ячӗпе пуçланса кайнӑ социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, пирӗн трактористсемпе трактористкӑсем IV-мӗш кварталта трактор юсамалли плана ӑнӑçлӑн пурнӑçларӗç. Декабрӗн 20-мӗшӗ тӗлне 19 трактор вырӑнне 20 трактор юсанӑ. Ытти ялхуçалӑх машинисене юсас ӗçе те вӑхӑтра туса пыратпӑр. Эпир халиччен 29 трактор плугӗ, 7 сеялка, 16 культиватор, 1 молотилка юсарӑмӑр. Тракторсемпе ялхуçалӑх машинисене юсас ӗç Василий Пыркин, Григорий Люкин, Гата Халиуллина, Пантелеймон Кураков ертсе пыракан бригадӑсенче уйрӑмӑнах ӑнӑçлӑ пырать.

МТС тракторсем юсамалли тапхӑра тӗплӗн хатӗрленсе кӗтсе илчӗ. Тракторсем юсанӑ çӗрте ӗçлекенсем валли столовӑй пур. Юсанӑ çӗрте кирлӗ станоксемпе тӗрлӗ оборудование вӑхӑтра хатӗрленӗ. Кӑмрӑк тата двигатель валли горючи çителӗклӗ.

Пирӗн МТС-ри трактористсемпе трактористкӑсем, юсав ӗçӗнчи рабочисем, Краснодар крайӗнчи Старо-Мышастовски МТС коллективӗ социализмлӑ ӑмӑрту пуçласа яма чӗннине ырласа, ӑмӑртӑва хутшӑнчӗç. СССР Верховный Советне суйламалли кун тӗлне—февралӗн 10-мӗшӗ тӗлне пирӗн МТС коллективӗ тракторсене юсамалли плана пӗтӗмпех пурнӑçлама обязательство илчӗ. Халӗ тракторсене юсас тӗлӗшпе икӗ смена ӗçлеççӗ. МТС коллективӗ илнӗ обязательствӑна пурнӑçлассишӗн пӗтӗм вӑя хурса ӗçлет.

В. АРХИПОВ,
Чкаловски МТС директорӗ.

ÇӖНӖ ВИТЕСЕМ

Елчӗк районӗнчи нумай колхозсем кӑçал обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх валли çӗнӗ витесем турӗç. Патрекелӗнчи «Осоавиахим» колхоз выльӑх-чӗрлӗх çуртӗрӗсене тӗплӗн юсанӑ. Пӑру тата пӳтек витисем çӗнӗрен тунӑ. Выльӑхсем валли шыв ӑшӑтма тата тӗрлӗ апат пӗçерме ятарласа кухня тунӑ. Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз 40 лаша вырнаçмалӑх çӗнӗрен вите туса пӗтернӗ. Çак витере пӗтӗ кӗсресене хӑмламалли тата тихаллӑ кӗсресене усрамалли пӳлӗмсем пур.

Çавӑн пекех Хӗрлӗ Çырти «Красное знамя», Аслӑ Таяпари Молотов ячӗпе тӑракан колхозсем çӗнӗрен сысна витисем, Лаш Таяпари Крупская ячӗпе тӑракан колхозра лаша вити, «Ново-Тоскаево» колхозра ӗне вити çӗнӗрен туса пӗтернӗ.

М. ЕГОРОВ.

КОЛХОЗ ТЕАТРӖ

КАЛИНИНО. Чӑвашсен пӗрремӗш колхоз театрӗ çак кунсенче икӗ бригадӑна уйрӑлса колхозсенче спектакльсем лартса пама тытӑнчӗ.

Пӗрремӗш бригада Н. Гоголь çырнӑ «Авлану» комедине Калинино, Вӑрнар тата Шӑхасан районӗсенчи колхозсенче лартса парать.

Иккӗмӗш бригада концерт программипе Тӑвай тата Канаш районӗсенчи кашни колхозрах пулма шутлать.

Театр коллективӗнчи коммунистсемпе комсомолецсем гастроль вӑхӑтӗнче колхозниксене «СССР Верховный Советне суйламалли Положени» çинчен ӑнлантарса пама, çавӑн пекех колхозсенчи стена хаçачӗсене кӑларма тата ялти драмкружоксене пулӑшма ятарласа çынсем уйӑрнӑ.

Театр декабрӗн 31-мӗшӗччен колхозсенче гастрольте пулать.

Кипечкасси суйлав участокӗнче

ИШЛЕЙ. Кипечкасси суйлав участокӗнче СССР Верховный Совет суйлавне тимлӗн хатӗрленеççӗ.

Пур колхозсенче те 10-шар килӗ çумне çирӗплетнӗ агитаторсем кашни каçах суйлавçӑсене суйлав Положенийӗпе Сталинла Конституци çинчен ӑнлантарса параççӗ.

Суйлав Положенине вӗрентес ӗçре коммунистсемпе комсомолецсем лайӑх ӗçлеççӗ. Суйлав иртермелли çурта — «Большевик» колхозӑн клубне шалтан илемлетсе çитернӗ, халӗ тул енчен илемлетеççӗ.

Кунта кабинӑсем тума тытӑннӑ. Крӑççин, сӗтелсемпе пукансем çителӗклӗ хатӗрлесе çитернӗ. Суйлав кунне буфет та пулать, буфет валли уйрӑм пӳлӗм палӑртса хунӑ.

Колхозниксен килӗсенче СССР Верховный Совет суйлавне хатӗрленме чӗнекен лозунгсем çакӑнса тӑраççӗ. Лозунгсене шкул ачисем çырса панӑ.

Суйлава хатӗрленнӗ май колхозсенче килес çулхи çуракине хатӗрленесси вӑйланса пырать, пур колхозсенче те уя тислӗк кӑлараççӗ.

«Красный танк» колхоз вӑрлӑхсене пӗтӗмпех триер витӗр кӑларса тасатса хунӑ. «Партизан» колхозра та вӑрлӑх тасатаççӗ.

В. ЧИГАРКИН.

Участокри суйлав комиссийӗсен канашлӑвӗ

ЕЛЧӖК. (Телефонпа). Декабрӗн 21-мӗшӗнче Елчӗкре участоксенчи суйлав комиссийӗсен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлура участоксенчи суйлав комиссийӗсен председателӗсем, председатель заместителӗсем, секретарӗсем тата агитпункт-сен руководителӗсем пулчӗç.

Участоксенчи суйлав комиссийӗсен задачисем çинчен канашлура ӗççынни депутачӗсен Елчӗк райсовет исполкомӗн председателӗ З. Осипов юлташ доклад туса пачӗ. Союз Советне суйлас тӗлӗшпе ӗçлекен 272-мӗш Канаш суйлав округӗнчи суйлав комиссийӗн секретарӗ А. Димитриев юлташ участоксенчи суйлав комиссийӗсен организациллӗ ӗçӗсем çинчен каласа пачӗ. ВКП(б) райкомӗн секретарӗ С. Макаров тата пропагандӑпа агитаци отделӗн заведующийӗ В. Немцев юлташсем агитаципе массӑллӑ ӗçе мӗнле туса пымалли çинчен чарӑнса тӑчӗç.

Т. ИВАНОВ.

СССР КОНСТИТУЦИЙĔ ÇИНЧЕН КАЛАÇУСЕМ

ССР Союзĕн государство тытăмлăхĕ

Юлашки. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммуни» 240-мĕшпе 248-мĕш номерĕсенче.

АВТОНОМИЛЛĔ РЕСПУБЛИКАСЕМ ЧЕЧЕКЛЕННИ

Хăшпĕр союзлă республикăсенче, вĕсенче пурăнакан тĕп халăхпа пĕрлех, урăх халăхсем те пурăнаççĕ. Вĕсем çав республикăсенчи халăхăн сахалрахăш пайĕ пулаççĕ, вĕсен хăйсен нациллĕ уйрăмлăх пур. Çав халăхсем хăйсен ирĕкĕпе автономиллĕ республикăсем туса хунă. Çав республикăсенчен кашниех ăна тунă халăхăн ятне илнĕ. Çапла, самахран, тутарсен, пушкăртсен, чăвашсен, мордвасен, якутсен, абхазецсен тата ыттисен те автономиллĕ республикăсем пур.

Пур автономиллĕ республикăсем те чи кĕске вăхăтрах хăйсен хуçалăхĕпе культурине вăйлăн аталантарчĕç. Тĕслĕхрен, хамăрăн пĕр-пĕр автономиллĕ республикăна илер.

ССР Союзĕн Европа пайĕнчи çурçĕрхĕвелтухăç енче, Печорăпа Выгегда юханшывĕсен бассейнĕнче, çутçанталăк пуянлăхĕсем тĕлĕшпе тулăх та пысăк çĕршыв сарăлса выртать. Патша вăхăтĕнче çакăнта пурăнакан коми халăхĕн пурнăçĕ çав тери йывăр, тĕттĕм те мĕскĕн пулнă. Вĕсем яланах нушапа тертленсе пурăннă. Патша влаçне хирĕç комисем темиçе хут та восстани тунă. Анчах та вĕсен восстанине хаярăн путарнă. Коми халăхĕ пĕтсе пынă.

Совет влаçĕ вăхăтĕнче коми халăхĕ çĕнĕрен ура çине тăрса телейлĕ пурнăç турĕ, вăл хăйĕн нациллĕ советлă государство организацине — **Коми Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикине** туса хучĕ. Ку республикăн столици Сыктывкар хулинче. Республикăра промышленность аталанчĕ: унта тĕрлĕрен заводсем туса лартнă, унта халĕ çĕркăмрăкĕпе нефть тупаççĕ. Коми республикинчи тырă акмалли çĕр лаптăкĕ виçĕ хут ытла ӳснĕ. Коми республикинчи колхозсен уй-хирĕсенче тракторсемпе комбайнсем ĕçлеççĕ.

Коми халăхĕн нациллĕ культури те чечекленчĕ. Республикăри мĕнпур халăхăн 97 процентĕ халĕ хут пĕлет. Шкул çулне çитнĕ ачасем пурте тăван чĕлхепе хут вĕренеççĕ. 1939 çулта республикăра 103 вăтам шкул, 2 аслă шкул, 14 техникум, 3 театр пулнă. Коми республикинче наци литератури те ăнăçлăн аталанса пырать.

Хăйсен автономиллĕ республикисене туса хунă пирĕн ытти халăхсем те хăйсен хуçалăхĕпе культурине аталантарас тĕлĕшпе çавăн пекех питĕ пысăк çитĕнӳсем турĕç.

АВТОНОМИЛЛĔ РЕСПУБЛИКАСЕН ГОСУДАРСТВО ТЫТĂМЛĂХĔ

Кашни автономиллĕ республика рабочисемпе хресченсен нациллĕ советлă социализмлă государстви пулса тăрать. Вăл пĕр-пĕр союзлă республика составне (ун урлă вара Совет Союзне) кĕрет.

Автономиллĕ республика, союзлă республикăн составне кĕрсе, хăйĕн территорийĕнче хăйĕн автономиллĕ государство влаçне пурнăçа кĕртет. Çакă ĕнтĕ республика хăйĕн государство органĕсем урлă хăйне тытса тăнине пĕлтерет.

Автономиллĕ республикăн хăйĕн Конституцийĕ пур, хăйĕн республикинче вăл хăй законсем кăларать, çав законсем вара республикăн территорийĕнче обязательнăй пулса тăраççĕ. Автономиллĕ республикăн территорийĕнче çавăн пекех тата Пĕтĕм Союзри законсем те тата тивĕçлĕ союзлă республикăн законĕсем те обязательнăй пулса тăраççĕ.

Автономиллĕ республикăн хăйĕн государство влаçĕпе государство управленийĕн аслă органĕсем—автономиллĕ республикăн Верховнăй Совечĕ, Верховнăй Совет Президиумĕ тата Халăх Комиссарĕсен Совечĕ (правительстви) пур.

Çак органсем пурте, çавăн пекех тата республикăри вырăнти Советсемпе вĕсен Исполнительнăй Комитечĕсем, халăх сучĕсем, шкулсемпе ытти культура учрежденийĕсем халăхăн тăван чĕлхипе ĕçлеççĕ.

Çапла ĕнтĕ, автономиллĕ республикăна туса хунă кашни совет халăхĕн хăйĕн территорийĕнче государство управленийĕ енĕпе аслă правасем пур. Вăл хăйĕн шалти мĕнпур ĕçĕсене хăй ирĕкĕпе татса пама пултарать.

Кунсăр пуçне, кашни автономиллĕ республикăн Совет Союзĕн аслă органĕнче хăйĕн уйрăм представительство пур. Çав представительсем ĕнтĕ кашни автономиллĕ республикăран суйласа яракан 11 депутат пулаççĕ. Çав депутатсем ССР Союзĕн государство влаçĕн аслă органĕнче хăйсен нацийĕн уйрăм интересĕсене каласа параççĕ.

Çакăн пек ĕнтĕ автономиллĕ республикăсен государство тытăмлăхĕ.

АВТОНОМИЛЛĔ ОБЛАСТЬ

Хăйсен хисепĕ тĕлĕшпе йышлах мар совет халăхĕсем те хăйсен нациллĕ государство организацине — автономиллĕ облаçсемпе наци округĕсене туса хунă. Халĕ ĕнтĕ çавăн пек пĕр-пĕр халăхăн историйĕпе кăштах паллашар.

Çĕпĕрте, Енисей шывĕн тури пайĕпе Абакан шывĕн çыранĕсем тăрăх мĕн ĕлĕк-авалтанах хакассем пурăнаççĕ. Патша вăхăтĕнче çак анлă çĕршыван çутçанталăк пуянлăхĕсемпе усă курман. Хакас халăхне патша чиновникĕсем, вырăс капиталисчĕсем, хăйсен князĕсемпе пуянĕсем тискеррĕн пусмăрланă. 1881 çулта «Çĕпĕр хаçатĕнче» «тепĕр 20 çултан Абакан улăхĕнче пĕр тузенец та юлмĕ», тесе çырнă.

Анчах та Октябрьти революци пулчĕ. Совет влаçĕ вăхăтĕнче хакас халăхĕ чĕрĕлсе ура çине тăчĕ, вăл социализм строительствин ĕçне хутшăнчĕ, хăйĕн **Хакас автономиллĕ облаçне** туса хучĕ. Ку республикăн центрĕ Абакан хулинче.

Хакас автономиллĕ облаçне хакас халăхĕ хăйĕн ирĕкĕпе тунă. Вăл Российăри Союзлă Республикăн Красноярски крайĕн составне кĕрет. Хакас халăхĕн хăйĕн нациллĕ государство влаçĕпе государство управленийĕн органĕсем—ĕççынни депутачĕсен Совечĕ тата çак Советăн Исполнительнăй Комитечĕ пур. Кунта пĕтĕм государство органĕсемпе культура учрежденийĕсем хакас халăхĕн тăван чĕлхипе ĕçлеççĕ.

Автономиллĕ область хăйĕн шалти пурнăçĕнчи пур ыйтусене хăй татса парать. Кунсăр пуçне, автономиллĕ облаçăн ССР Союзĕн государство влаçĕн аслă органĕнче хăйĕн уйрăм представительство пур. Çав представительсем ĕнтĕ автономиллĕ облаçран халăх суйласа янă 5 депутат пулаççĕ. Çав депутатсем урлă автономиллĕ республикăри халăх ССР Союзĕн государство влаçĕн аслă органĕнче хăйсен нациллĕ интересĕсене каласа параççĕ.

Ĕлĕк вырăнтан вырăна куçса çӳресе пурăннă хакас халăхĕ халĕ пĕр вырăна вырнаçса ларчĕ. Кунта çĕркăмрăкĕ, ылтăн, барит тупас тĕлĕшпе ĕçлекен шултăра промышленность туса хунă. Хакас облаçĕнчи колхозсен уйхирĕсенче тракторсемпе комбайнсем ĕçлеççĕ.

Хакас облаçĕнчи çынсем пурте тенĕ пекех хут пĕлеççĕ. Хакас облаçĕнче учительсен институчĕ, 3 техникум, 3 театр, хăйсен издательстви пур, унта 11 хаçат тухса тăрать, хакас халăхĕн нациллĕ литератури ăнăçлăн аталанса пырать.

НАЦИ ОКРУГĔ

Совет Союзĕн Инçетри Çурçĕрĕнче пурăнакан вак халăхсем хăйсен наци округĕсене туса хунă. Наци округĕ мĕнлине ăнлантарса парас шутпа, тĕслĕхрен, çавăн пек пĕр-пĕр округа илсе кăтартар.

Обьпе Таз юханшывĕсен анатри пайĕнче тата Ямал çурутравĕпе ытти çурутравсем çинче мĕн ĕлĕк-авалтанах ненецсем пурăнаççĕ. Çак çĕршывăн иксĕмĕш пуянлăхĕ вăл—«çемçе ылттăн» — мамăк тир, çавăн пекех тата хаклă йышши пулăсем пулаççĕ. Анчах та патша вăхăтĕнче ненец халăхĕн кунçулĕ питĕ тертлĕ пулнă. Вĕсем, вырăс мар ытти вак халăхсем пекех, пĕтсе пынă.

Совет влаçĕ вăхăтĕнче ненец халăхĕн пурнăçĕ калама çук улшăнчĕ. Ненецсем **Ямалпа Ненец наци округĕ** туса хунă хыççăн çак улшăнусем татах та вăйлăрах пулса пычĕç. Ку округăн центрĕ Салехард хули пулса тăрать.

10 çул хушшинче мĕнпур халăхăн çур пайĕ ытла пĕр вырăнта пурăнма пуçларĕ. Ку округра пысăк пулă завочĕсем туса лартнă, вĕсем тавра вара пулă тытакан колхозсем организациленĕ. Мамăк тир тупмалли промыслан тĕп сыпăкĕ халĕ колхозри сунарçăсен бригади пулса тăчĕ. Ĕлĕк кунта пăлансем çеç ĕрчетнĕ, халĕ ĕнтĕ ĕне-выльăх, сурăхсем, лашасем, сыснасем усраççĕ. Поляр уйĕнчи леш енчи çак çĕршывра çĕрĕçĕ пуçланса кайрĕ.

Ĕлĕкхи вăхăтра округра хут пĕлекен çынсем пачах та пулман теме юрать. Кунта ĕлĕк медицина тавраш̆ĕ те пулман. Халĕ ĕнтĕ вуншар больница, амбулатори, фельдшер пункчĕсем, акушерка пункчĕсем, вуншар шкул уçнă. Округра педагогика училищи, пăлан ĕрчетекен специалистсене хатĕрлекен зоотехникум, виçĕ наука станцийĕ пур, 6 хаçат тухса тăрать. Ненецсен хăйсен наци литератури те аталанма тытăнчĕ.

Наци округне халăх хăй ирĕкĕпе тăвать, вăл вара Российăри Союзлă Республикăн пĕр-пĕр облаçне е крайне кĕрет. Унăн хăйĕн нациллĕ государство влаçĕпе государство управленийĕн органĕсем — ĕççынни депутачĕсен Совечĕ тата çав Советăн Исполнительнăй Комитечĕ пур. Округри пур органсемпе учрежденисем те халăхăн тăван чĕлхипе ĕçлеççĕ.

Наци округĕ хăйĕн шалти пурнăçĕнчи пур ыйтусене те хăй татса парать. Наци округĕнчи граждансем ССР Союзĕн государство влаçĕн аслă органне хăйсен представительне—пĕр депутат суйлаççĕ. Вăл вара ССР Союзĕн государство влаçĕн аслă органĕнче халăхăн интересĕсене каласа парать.

Хăйсен нациллĕ государство организацийĕсене туса хунă мĕнпур совет халăхĕсем çав тери пысăк çитĕнӳсем тунине мĕнпе ăнлантарса памалла-ха?

Çак çитĕнӳсем вĕсем коммунистсен партийĕпе совет влаçĕн ленинла-сталинла наци политики тĕрĕслĕхне пула пулчĕç. Ун çинчен тĕплĕнрех эпир тепĕр статьяра каласа парăпăр.

В. КАРПИНСКИЙ.

«ГРОЗА» ТАТА «РЕВИЗОР» ПЬЕСĂСЕНЕ ЧĂВАШЛА КУÇАРНА

РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен управленийĕ хушнипе Леонид Агакопа Илья Тукташ писательсем А. Н. Островскин «Гроза» драмине, Н. В. Гоголĕн «Ревизор» комедине чăвашла куçарнă. Çитес çулта ку пьесăсем Мускаври «Искусство» издательствинче пичетленсе тухаççĕ.

Польшăра нимĕçсем асаплантарса вĕлернĕ Совет çыннисене йышлăн пытарнă шăтăксене тупнă

ВАРШАВА, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăн пичет агентствин корреспонденчĕ Замостьерен çапла пĕлтерет: Карловце ялĕ çывăхĕнче тыткăна лекнĕ совет çыннисене пытарнă шăтăксем тупнă. Вĕсене гитлеровецсем 1941—1942 çулсенче хĕлле асаплантарса вĕлернĕ. Корреспондент каланă тăрăх, çав вăхăтра Замостьере тыткăна лекнĕ совет çыннисем валли тунă икĕ лагерь пулнă. Вĕсенчен пĕри, йĕплĕ пралук карса çавăрнăскер, усă вырăнтах пулнă. 40 градуса çитекен шартлама сивĕсем вăхăтĕнче тыткăнри çынсем сивĕпе тата выçăпа асапланса йышлăн вилнĕ. Кашни ир çывăхри хирсене питĕ нумай виле илсе кайса пытарнă.

БОЛГАРИРИ РАБОЧИСЕН (КОММУНИСТСЕН) ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔН 9-МĔШ ПЛЕНУМĔ

СОФИЯ, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсенче Болгарири рабочисен (коммунистсен) партийĕн Центральный Комитечĕ пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Пĕлтерӳре çапла каланă: декабрĕн 12-мĕшĕнче Болгарири рабочисен (коммунистсен) партийĕн Центральный Комитечĕн 9-мĕш пленумĕ пулса иртнĕ. Пленума Георгий Димитров председатель пулса ертсе пынă. Пленумра Болгарири рабочисен (коммунистсен) партийĕнчен Болгари парламентне суйланă депутатсем те пулнă. Пĕрлехи ларура çак докладсене итлесе сӳтсе-явнă: хальхи ларупа умри задачăсем, партире отчетпа суйлав кампанине ирттересси, парти çутĕçĕ тĕлĕшпе ĕçлесе тăрасси, Болгарири рабочисен (коммунистсен) партийĕн парламентри ушкăнне организацилесси тата вăл мĕнле ĕçлесе тăрасси çинчен. Пленум пур ыйтусем тăрăх та пĕр сасăпа тивĕçлĕ решенисем йышăннă.

Пĕрлехи ларура Болгарири рабочисен (коммунистсен) партийĕн парламентри ушкăнĕн бюроне суйланă. Бюро председателĕ пулма Георгий Димитрова суйланă, унăн заместителĕсем пулма Василь Коларова, Трайче Костова тата Иван Пашев доктора суйланă.

БРАЗИЛИРИ СУЙЛАВСЕН МАЛТАНЛĂХА ПĔЛТЕРНĔ РЕЗУЛЬТАЧĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Рио-де-Жанейро хулинчен çапла пĕлтерет: Бразилири президент суйлавĕнче социал-демократсен партийĕн кандидачĕ Дутра генерал çиеле тухнă. Малтанлăха пĕлтернĕ результатсем çакăн пек: Дутра генералшăн 2.956.424 суйлавçă сасăланă, демократиллĕ союз кандидачĕшĕн Гомес генералшăн 1.868.881 суйлавçă сасăланă, коммунистсен партийĕн кандидачĕ Фиуза 501.242 сасă пухнă.

ЛЮКСЕМБУРГРА ГИТЛЕР ГАУЛЕЙТЕРĔ ПУЛСА ĔÇЛЕНĔ СИМОН ХĂЙНЕ ХĂЙ ВИЛНĔ

ЛОНДОН, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио Люксембург юстици министрĕ каласа панине пĕлтернĕ. Пĕлтерӳре çапла каланă: Люксембургра Гитлер гаулейтерĕ пулса ĕçленĕ Симон хăйне хăй вилнĕ.

Симона нумаях пулмасть Падеборн хулинче тытса хунă пулнă. Вăл унта хăйне пахчаçă пек кăтартса пытанса пурăннă.

ДЖОН ЭМЕРИЕ ВĔЛЕРНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 19-мĕшĕнче ирхине Уэндсворт тĕрминче, суд йышăннă приговор тăрăх, тăшмана сутăнса ĕçленĕшĕн Джон Эмерие çакса вĕлернĕ.

Джон Эмери акăлчансен Инди тĕлĕшпе министр пулса ĕçленĕ Леопольд Эмерин ывăлĕ.

ИНДО-КИТАЙРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ДЕЛИ, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Делири радио çапла пĕлтерет: Индо-Китайра Коханхинăн кăнтăр пайĕнче Англипе Франци çарĕсем çаплах аннамитсен отрячĕсене хирĕç çапăçаççĕ. Инди çарĕсем Намса утравĕ çине аннă. Вăл утрава аннамитсем хирĕç тăмалли вăйлă тĕреклетнĕ пункт туса хунă пулнă, анчах та хаяр çапăçусем хыççăн Инди çарĕсем çав пункта пĕтĕмĕшпех тытса илнĕ.

Инди çарĕсем нумай вăхăтчен хупăрласа тăнă хыççăн тата темĕн чухлĕ юн тăкса штурмланă хыççăн Травин крепоçне тытса илнĕ, ку крепоçа аннамитсем питĕ хытă хӳтĕлесе çапăçнă. Ку районра çапăçусем халĕ те пыраççĕ.

ЯВА УТРАВĔ ÇИНЧИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Ява утравĕ çинчи лару-тăру малтанхи пекех сивĕч. Семарангра, Батавирен 30 миля кăнтăртарахра, çĕнĕрен çапăçусем пуçланса кайнă.

ЛОНДОН, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио союзниксен Ява утравĕ çинчи штабĕ пĕлтернине парать. Пĕлтерӳре çапла каланă: çапăçма пуçланă Голланди çарĕсем Батави çывăхĕнчи пĕр района тытса илнĕ. Семаранг районĕнче хирĕç-хирĕç перĕ. Индонезиецсем хăйсен вăйĕсене утравăн хĕвелтухăçĕнчи пайĕнче пухса тăратаççĕ.

Нимĕçсен вăрçă пуçланăшăн айăплă тĕп преступникĕсене Нюрнбергра суд туни

ДЕКАБРĔН 20-МĔШĔНЧИ КАÇХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Америка айăплаканĕсен представителĕ Фар майор паян трибуналăн каçхи ларăвĕнче СС-ăн преступникла ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларакан документсем парса пĕтерне. Вăл трибунала çапла пĕлтерне: СС организацийĕн членĕсем хушшинче Гитлер партийĕпе правительствинче аслă вырăн йышăнса тăнă çынсем пулнă, тенĕ. Германин 1936-мĕшпе 1937-мĕш çулсенчи официальнăй документĕсемпе усă курса, айăплакан çакна палăртса парать: çав вăхăтра эсэсовецсенчен халь айăпланакан Гесс, Борман, Нейрат, Риббентроп, Заукель тата Зейсс-Инкварт обергруппенфюрерсем пулса ĕçленĕ; айăпланакан Кальтенбруннера илсен, вăл СС-а гестапора хăйне уйрăм вырăн йышăнса тăнă. СС пĕтсе ларас умĕн çав çынсен чинĕ тата аслăрах пулнă. СС организацийĕ мĕнле-мĕнле преступленисене хутшăнни çинчен каласа, айăплакан çав организацире членра тăрас ĕç ирĕклĕ пулнине тепĕр хут палăртса панă. Ку çеç те мар, тет Фар, документсем çакна кăтартса параççĕ: СС-а члена питĕ хытă суйласа илнĕ. СС-ăн ĕçĕсемпе задачисем çав тери анлă пулнă пирки тата çав организаци тунă преступленисем ытла та йышлă пулнă пирки, вĕсемшĕн пĕтĕм организацие айăплă тесе шутламалла.

Юлашкинчен айăплакан çапла калать: СС организацийĕ гитлерла каварлашуçăсен тĕп заданийĕсене пурнăçа кĕртсе пынă, вăл трибунал уставĕн 6-мĕш статьинче кăтартнă преступленисене тунă, çавăнпа та СС организацине преступникла организаци тесе шутламалла, тет.

Фар майор хыççăн Стори полковник калать. Вăл трибунала гестапопа хăрушсăрлăх службин преступленийĕсене кăтартакан документсем парать.

Гестапо историйĕ çинчен Стори çапла калать: ăна чи малтан Пруссире 1933 çулта туса хунă, тет. Унтан вăл гестапона Геринг тунине кăтартакан документ çинчен калать. Гестапо ĕçĕсенче Кальтенбруннер мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен айăплакан çапла калать: полици тĕлĕшпе командовани системи Гиммлер патĕнчен тӳрех Кальтенбруннер патне пынă. Кальтенбруннер вăл хăрушсăрлăх полицийĕн начальникĕ пулнă, çавăнпа пĕр вăхăтрах тата хăрушсăрлăхăн тĕп управленийĕн начальникĕ пулнă. Стори полковник гестапо организацийĕн схемине тĕплĕн ăнлантарса парать тата гестапо провокациллĕ ĕçсем туни çинчен каласа парать.

Стори полковник малалла нимĕçсем оккупациленĕ территорире гестапо гражданла халăха йышлăн вĕлерни çинчен калать. Вăл «эйнзатпгруппы а» ятлă хăйне уйрăм ушкăнăн ĕçĕсем çинчен çырса панă питĕ вăрттăн отчета вуласа парать. Çав отчетпа пĕрле карттă пур. Вăл карттă çав ушкăнсем ĕçленĕ территорире еврейсене мĕнле вĕлерсе пынине кăтартать. Эстонире 963 еврее вĕлернĕ, Латвире—35.238 еврее, Литвара — 136.421 еврее, Белоруссире — 41.828 еврее вĕлернĕ. Çав ушкăнсене гестапо тунă, вĕсем нимĕçсем оккупациленĕ территорире çарпа пĕрле е унăн тылĕнче ĕçленĕ.

Юлашкинчен Стори полковник тата тепĕр документ кăтартать. Çав документран çакă курăнать: хĕвелтухăçĕнчи çĕрсенче çынсене вĕлерес ĕçре усă курнă «душегубкăсене» Германире тунă, вĕсемпе 1941 çултан пуçласа мĕн вăрçă пĕтиччененех усă курнă.

ТРИБУНАЛ ЯНВАРĔН 2-МĔШĔЧЧЕН ĔÇЛЕМЕ ЧАРĂНАТЬ

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 20-мĕшĕнче каçхи лару хупăнас умĕн, айăплакан Стори полковник каласа пĕтерне хыççăн, трибунал председателĕ лорд Лоуренс çапла пĕлтерне: трибуналăн тепĕр ларăвĕ январĕн 2-мĕшĕнче пулать, тенĕ.

Финляндири вăрçă преступникĕсене суд туни

ТАННЕРА, РЕЙНИККА ТАТА КИВИМЯКИЕ ТЫТСА ХУПМА ЙЫШĂННĂ

ХЕЛЬСИНКИ, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндири вăрçă преступникĕсен ĕçне пăхса тухакан суд паян айăпланакан Таннера, Рейникка тата Кивимякие тытса хупма йышăннă. Вĕсене судчен хупса усрассинчен хăтарнă пулнă. Айăпланакан Кукконен судăн тепĕр ларăвне хăех пымалла, унсăрăн ăна тытса хупма пултараççĕ.

Судăн тепĕр ларăвĕ 1946 çулхи январĕн 9-мĕшĕнче пулать. Рютие, Рангеле, Линкомиеса, Рамсая, Таннера, Рейникка тата Кивимякие суд ларăвĕ хупăнсанах кĕперне тĕрмине илсе кайнă.

Германири Контроль Совечĕн 15-мĕш ларăвĕ çинчен пĕлтерни

БЕРЛИН, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 20-мĕшĕнче Берлинра Контроль Совечĕн черетлĕ ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларăва Макнерни генерал председатель пулса ертсе пынă. Ларура Жуков Маршал, Монтгомери фельдмаршал, Кельц генерал пулнă.

Контроль Совечĕ Потсдамри конференцин Германи пирки йышăннă решенийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе çырса хатĕрленĕ календарлă плана çирĕплетнĕ.

Германин Британи оккупацилесе тăракан пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсене саланса ямалли плана ырланă. Çав план тăрăх Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене тата вĕсене тытса тăма хăварнă штабсене 1946 çулхи январĕн 31-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех салатса ямалла.

Контроль Совечĕ вăрçă преступленийĕсем тунăшăн, мирпе этемлĕхе хирĕç преступленисем тунăшăн айăплă çынсене наказани парасси çинчен калакан 10-мĕш номерлĕ закона алă пуснă.

Координаци Комитечĕн ларăвĕ çинчен пĕлтерни

БЕРЛИН, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 21-мĕшĕнче Берлинра Координаци Комитечĕн черетлĕ ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларăва Клей генерал председатель пулса ертсе пынă. Ларура арми генералĕ Соколовский, Плейфер генерал, Кельц генерал пулнă.

Комитет Германин почтăпа çыхăну департаментне туса хурасси çинчен тепĕр хут сӳтсе-явнă. Франци делегацийĕ килĕшмен пирки ку ыйту тăрăх калаçса таталайман. Америка представителĕ çав департамента Америка, Британи тата Совет Союзĕ йышăнса тăракан зонăсем валли тума сĕннине пăхса тухассине, Совет Союзĕпе Британи представителĕсем сĕннипе, тепĕр вăхăта хăварнă.

Координаци Комитечĕ союзниксен Берлин комендатурине вăл мĕн-мĕн туса тăмалли çинчен каласа панă.

Комитет Германири демократиллĕ тăватă партин представителĕсене Нюрнбергри судра сăнавçăсем пулса ларма ирĕк панă. Çак ĕçе мĕнле йĕркепе пурнăçламаллине çырса хатĕрлеççĕ.

Ют çĕршывсен Берлинри организацийĕсем валли союзниксен комендатури урлă çуртсем парасси çинчен калаçса таталнă.

Германире союзниксен çар маркисене пичетлесе кăларни çинчен виçĕ уйăхра пĕрре доклад туса памалли çинчен калаçса таталнă.

Координаци Комитечĕ Германин оккупаци зонисем хушшинче клиринг расчечĕ тума йышăннă.

Австрин Наци совечĕн пĕрремĕш сессийĕ

ВЕНА, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер ноябрĕн 25-мĕшĕнче суйланă Наци совечĕн (Австри парламенчĕн) пĕрремĕш сессийĕ уçăлнă. Парламентăн пысăк залне депутатсем пухăнса ларнă: сылтăмра—халăх партийĕн представителĕсем лараççĕ, центрта—социалистсем, сулахайра—коммунистсем, Балконсенче тата ложăсенче йышлă хăнасем пулнă, вăл шутра союзниксен оккупациллĕ çарĕсен главнокомандующийĕсем Конев Маршал, Марк Кларк генерал, Маккерри генерал тата Бетуар генерал, вĕсен политикăллă советникĕсем, Вена коменданчĕ Лебеденко генерал-лейтенант тата Австри журналисчĕсемпе ют çĕршывсен журналисчĕсем пулнă.

Ларăва чи ватă депутат Карл Зейц уçнă.

Сесси Наци совечĕн председателĕ пулма Куншака (халăх партийĕнчен) суйланă, вице-председательсем пулма—Бема (социалиста) тата Харбаха (халăх партийĕн членне) суйланă. Куншак хăйĕн сăмахĕнче Наци совечĕн депутачĕсене саламланă. Унтан вăл Вăхăтлăх правительствăн ĕçĕсем çинчен отчет туса пама государство канцлерне Реннер доктора сăмах панă.

Парламент Вăхăтлăх правительствăн отчетлă докладне ырлама йышăннă.

КАРЛ РЕННЕРА АВСТРИ ПРЕЗИДЕНЧĔ ПУЛМА СУЙЛАНĂ

ВЕНА, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Паян парламент çуртĕнче Наци пухăвĕн ларăвĕ пулса иртнĕ, ăна Австри республикин президентне суйлама пухнă. Президента бюллетеньсем ярса вăрттăн сасăласа суйланă. Кашни депутата ятран чĕннĕ, вара вăл суйлав ещĕкĕ патне пырса, унта хăйĕн бюллетенне янă. Республика президенчĕ пулма Карл Реннер доктора суйланă. Наци пухăвĕн залра пулнă 205 депутатĕнчен Реннершăн 204 депутат сасăланă. Пĕр бюллетене нимĕн çырмасăрах пăрахнă. Наци пухăвĕнче мĕн пурĕ 215 член (Наци совечĕнче— 165, Союз совечĕнче—50).

Президента суйланă хыççăн Реннера зала чĕнсе кĕртнĕ. Вăл хăйне шаннăшăн тав тунă тата республика конституцийĕпе мĕнпур законĕсене пурнăçа кĕртсе пыма сăмах панă.

Редакцие килнĕ çырусем

Государство пурлăхне салатаççĕ

Шăмăршă лесхозĕ юлашки çулсенче йывăç лартас тата çамрăк йывăçсене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе ытла та начар ĕçлет. Йывăç лартмалли çĕре хатĕрлемелли плана 40 процент кăна пурнăçланă, питомниксене кирлĕ пек пăхса тăмаççĕ. Вăрманти йывăçсене инвентаризацилес ĕçе пурнăçламан. Тĕрлĕ çырласем пухмалли плана тултараймарĕ: 500 килограмм шăлан çырли пухас вырăнне пурĕ те 30 килограмм кăна пухнă.

Лесхоз директорĕ Андреев вăрман хуçалăхне йĕркеллĕ пăхса тăрас вырăнне хăйĕн работникĕсемпе пĕрле тăтăшах киревсĕр ĕçсем тăвать тата юрăхсăр ĕçсене витсе тăрать. Пăчăрлă Пашъелĕнчи вăрман пăхакан Мансуров тăтăшах ĕçсе çӳрет, тĕрлĕ кученеççем илсе, вăрман хуçалăхĕнчи пурлăха салатать. Мансуров Тутар республикинчи «Смена» колхоза 100 килограмм кăмрăк, «Коммунар» колхоза 50 килограмм смала панă. Çакăншăн вара Мансуров хăйне валли 92 килограмм тырă илнĕ. Çакăн пек тĕслĕхсем сахал мар. Лесхозра тăвакан кăмрăка, смалана тата тикĕте шута илмеççĕ, çавна пула вĕсене ăçта кирлĕ унта салатаççĕ. Кăмрăк тăвакан Емелькин пĕр колхоза 200 килограмм смала панă, çавăншăн 1 центнер тырă илнĕ. Çак колхозранах Мансуров йывăçшăн тырă илнĕ. Андреев çаксене пурне те пĕлет, анчах нимĕн те тумасть. Хăй те касма юраман 19 юмана Ульяновск облаçĕнчи Языковăри пусма фабрикине сутнă. Уншăн 75 метр пусма илнĕ. Ăна вара хăйсем хушшинче пайланă. Лесхоз вăрман уçланкисене 20 гектара яхăн тырă акнă. Тырă лайăх çитĕннĕ, сахалтан та гектартан 7—8 центнер тулă тухнă. Анчах та Андреевпа унăн çывăх çыннисем гектартан пĕрер центнер кăна тулă тухнă, тесе акт çырнă. Çав тырпула комисси йышăнман. Подсобнăй хуçалăхри апатсимĕçе кирлĕ пек шута илмеççĕ. Лесхоз бухгалтерĕ Ежов учет ĕçне пăтраштарса янă.

Лесхозăн ОРС-не килекен тĕрлĕ таварсем рабочисем патне çитмеççĕ, чăн малтан лесхоз канцеляринче ĕçлекенсем хушшинче валеçĕнеççĕ. Лесхоз директорĕ Андреев юлташ кăçал 2 фуфайка, мамăклă 2 брюки, 3 ботинка, 2 мăшăр калуш тата ытти таварсем те нумай илнĕ. Çавăн пекех ОРС начальникĕ Корсаков, главнăй бухгалтер Ежов та рабочисем валли килнĕ тĕрлĕ таварсене нумай илнĕ. Вăхăтлăха ĕçлеме пыракан рабочисен çăкăр карточкисене хăйсене илнĕ тĕслĕхсем те пур.

Лесхозра специалистсем çителĕксĕр. Анчах та кунта специалистсем хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Кăпчанкă тымарри хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен специалист кирлĕ пулнă. Андреев çак ĕçе хăйĕн арăмне Зиновьевăна лартать. Ăна 450 тенкĕ тӳлес вырăнне 900 тенкĕ тӳлет. Зиновьева вăрман ĕçне нимĕн те пĕлмест, мĕншĕн тесен вăл халиччен учительница пулса ĕçленĕ. Вăрман хуралĕн инспекторĕнче ĕçлеме главнăй бухгалтерăн Ежевăн ывăлне Константина илнĕ. Çакăн пек çемьеллĕн ĕçлеççĕ Шăмăршă вăрман хуçалăхĕнче. Кунта пĕрпĕрне мĕнле май килнĕ, çавăн пек тӳлеççĕ, япаласем валеççĕ.

Шăмăршă вăрман хуçалăхне халех тĕплĕн тĕрĕслени кирлĕ.

И. ВТУЛКИН

Тырпул юр сине юлнăшăн кам айăплă?

Сĕнтĕр районĕнчи Ильинка ял Советĕнчи «Осоавиахим» колхоз кăçал хăйне юнашар колхозсенчен нумай начар ĕçлерĕ. Колхоз председателĕ Матвеев юлташ тырпул пухса кĕртес ĕçе кирлĕ пек организацилеме пултараймарĕ. Уйрăм звеньщинăпа ĕçлессине те йĕркелемерĕ. Çавна пула вăрлăхлăх клевер 1,5 гектар юр айне юлчĕ. Çулса хунă клеверăн икĕ капанĕпе те усă кураймарĕç, вăл та çая кайрĕ. Сур гектара яхăн лайăх çитĕннĕ кантăр та татмасăрх юр айне кайрĕ. Колхоз пурлăхĕ пĕтнĕшĕн айăплисем колхозниксем умĕнче кăна мар, халăх сучĕ умĕнче те ответ тытма тивĕçлĕ пулĕ, тесе шутлатпăр.

Г. КУКУШКИН.

Начар ĕçлекен ялпо

ШĂХАСАН. Уйкас Кипекри ялпо (председателĕ К. Иванов юлташ) суту-илӳ ĕçне ĕççыннисем ыйтнă пек туса пыраймасть. Кунта куллен кирлĕ таварсене вăхăтра илсе килмеççĕ. Ялпона 7 отделени кĕрет, анчах вĕсем те хăйсен ĕçне кирлĕ пек туса пымаççĕ. Лавкасенче нимĕнле тасалăх та çук, унти япаласем пĕтĕмпех тусанпа витĕннĕ. Лавкасен умĕнче çӳп-çап, улăм тавраш̆ĕ купаланса выртать. Тимĕрçкассинчи лавкана вара (лавка заведующийĕ Н. Петров юлташ) иртнĕ çултанпах çуса тасатман. Ялпо председателĕ Иванов юлташ хăйĕн отделенийĕсем мĕнле ĕçленипе пачах та интересленмест.

Г. СИРОТКИН, С. ЧĔКЕÇ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Наркомхозне ялан ĕçлеме инженер-энергетик, техник-строитель, технически учет секторĕн начальникĕ тата бухгалтер-ревизор кирлĕ. Ĕçлеме илнисене хваттер параççĕ тата апат-çимĕç парса тăраççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Дом Советов, 5-ый этаж, Отдел кадров Наркомхоза. Телефон 1—41.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печ... ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăçĕн пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 04039 Типография № 1 ... полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Тираж 16.000 экз.